27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1944 НОЯБРЬ 26 ВЫРСАРНИКУН 232(6727) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ГОВОРОВА ТРИБУЦ адмирала

ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, БАЛТИКА флочӗн карапӗсем пулӑшнипе вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, паян, ноябрӗн 24-мӗшӗнче, САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравне тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатса пӗтерне. Нимӗҫсем ҫав утравран РИГА заливне пырса кӗмелли вырӑнсене хӳтӗлекен пункт туса хунӑ пулнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, Совет Эстонийӗн ҫӗрне нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ.

САРЕМА утравне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: СТАРИКОВ генерал-лейтенантӑн, АЛФЕРОВ генерал-лейтенантӑн, эстонецсен ПЕРН генерал-лейтенант ертсе пыракан корпусӗ, ТРУШКИН генерал-майорӑн, РОМАНЕНКО генерал-майорӑн, РОМАНЦОВ генерал-майорӑн, АЛЛИКАС генерал-майорӑн, ФЕЛЬДМАН полковникӑн ҫарӗсем; СВЯТОВ контр-адмиралӑн, КУЛЕШОВ контр-адмиралӑн, ЮРКОВСКИЙ контр-адмиралӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн ГУСЬКОВАН, 1-мӗш рангри капитанӑн ОЛЕЙНИКАН, 2-мӗш рангри капитанӑн ЛАЗОН, 3-мӗш рангри капитанӑн МАКСИМЕНКОВАН, 3-мӗш рангри капитанӑн СИРОТИНСКИЙӖН, 3-мӗш рангри капитанӑн РЕЗНИЧЕНКАН, 3-мӗш рангри капитанӑн НОВОЖИЛОВАН, ЗУБОВ полковникӑн, ЛЕЙБОВИЧ майорӑн морякӗсем; артиллери генерал-майорӗн БРУССЕРАН, БЕРЕЗУЦКИЙ полковникӑн, АРУ полковникӑн, КАРПАЧЕВ полковникӑн, КАТУНИН полковникӑн, ГОРОБЕЦ полковникӑн, ПОТИФОРОВ полковникӑн, БОЙЧУК полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ЗАЗИМКОН, КУСЛАНУ полковникӑн, БАРИЛОВ подполковникӑн, ЧЕРНЫХ подполковникӑн, ЧЕСНОКОВ полковникӑн, ОЛЕЙНИКОВ майорӑн, КНЯЗЕВ майорӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн САМОХИНАН, авиаци генерал-майорӗн АНТОНОВАН, ГРЕСЬКОВ полковникӑн, МАТВЕЕВ полковникӑн, МЕХАННИКОВ подполковникӑн, КОРЕШКОВ полковникӑн, УСАЧЕВ подполковникӑн, КУРОЧКИН полковникӑн, МАНЖОСОВ полковникӑн, СЛЕПЕНКОВ подполковникӑн летчикӗсем; АКАТОВ полковникӑн, АФАНАСЬЕВ подполковникӑн, ЕРМИЛОВ майорӑн, ШЕЛЕХОВ майорӑн, ГУЛЬТЯЕВ подполковникӑн, ГУЛЯНИЦКИЙ подполковникӑн, СОЛОМАХИН подполковникӑн саперӗсем; МУЖЕВ полковникӑн связисчӗсем.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, САРЕМА утравне туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисене, чаҫсене тата карапсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, ноябрӗн 24-мӗшӗнче, 21 сехетре Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, ЛЕНИНГРАД фрончӗн паттӑр ҫарӗсене, вӑл шутра эстонецсен ПЭРН генерал корпусне тата Балтика флочӗн морякӗсене, САРЕМА утравне туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсемпе карапсене, САРЕМА утравне ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, пите чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТӐВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи ноябрӗн 24-мӗшӗ.

И. В. Сталинпа В. М. Молотов Мускавра И. Шубашич господинпа калаҫни ҫинчен Совет Союзӗпе Югослави пӗлтерни

Мускавра ноябрӗн 20—23-мӗшӗсенче Югослави Премьер-Министрӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич доктор, ҫавӑн пекех тата Югослави Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗн Заместителӗ Э. Кардель господин тата Югослави Посолӗ С. Симич господин СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗпе И. В. Сталинпа тата СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗпе В. М. Молотовпа калаҫнӑ. Ҫав калаҫусенче Югославин тӗп ыйтӑвӗсене туслӑн сӳтсе-явнӑ, вӗсене Югослави пӗрлешнӗ нацисем хушшинче мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине шута илсе сӳтсе-явнӑ.

Калаҫусенче Югославин пӗрлешӳллӗ Правительствине тума кирлине палӑртнӑ. Ҫав Правительствӑна Югослави Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗ маршал Иосип Броз-Тито Король Правительствин Председателӗпе И. Шубашич господинпа тунӑ килӗшӳсенче каланӑ пек тумалла.

Маршал Тито тата Премьер Шубашич халӑхӑн чӑн-чӑнах демократиллӗ вӑйӗсене пӗрлехи тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре пӗрлештерме тата демократиллӗ федерациллӗ Югослави тума тӑрӑшнине Совет Правительстви ырлать, мӗншӗн тесен ҫав ӗҫсем тӑшмана ҫӗнтерме тата Европӑра мир тума пулӑшаҫҫӗ.

Югослави Премьер-Министрӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Иван Шубашич господин Мускавран кайни

Ноябрӗн 24 мӗшӗнче Югослави Премьер-Министрӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин Мускавран тухса кайнӑ. Шубашич господинпа пӗрле ҫаксем тухса кайнӑ: Югослави Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Председателӗн Заместителӗ Э. Кардель господин. Югослави Халӑхӗн Ирӗклӗх Комитечӗн Лондонри представителӗ В. Велебит генерал-майор тата ыттисем те.

Вӗсене ҫаксем ӑсатса янӑ: СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ И. М. Майский, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа отделӗн Заведующийӗ В. А. Зорин, СССР Наркоминделӗн Протокол отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков тата Оборона Халӑх Комиссариачӗн Тулашри ҫыхӑну отделӗн Начальникӗ М. П. Кутузов генерал-майор, ҫавӑн пекех тата Югославин Совет Союзӗнчи Посолӗ С. Симич господин тата Югославин Совет Союзӗнчи Ҫар Миссийӗн Начальникӗ В. Терзич генерал-лейтенант.

Ӑсатса янӑ чухне хисеплӗ хурал тӑратнӑ тата Югославипе Совет Союзӗн флагӗсене ҫакнӑ.

Мускава Монголи Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ килни

Ноябрӗн 24-мӗшӗнче Мускава Монголи Халӑх Республикин суту-илӳ делегацийӗ килнӗ. Делегацие Премьер-Министрӗн Заместителӗ Маджиг пуҫ пулса ертсе пырать. Делегаципе пӗрле Монголи Халӑх Республикин Совет Союзӗнчи Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посланникӗ Самбу килнӗ.

Ҫурҫӗр вокзалӗнче делегацие ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ Ю. М. Каганович, Хӗвелтухӑҫ Управленин Начальникӗ М. И. Сладковский, Пӗтӗм Союзри «Совмонгтувторг» Объединени Председателӗ В. И. Зайцев, Пӗтӗм Союзри «Техноэкспорт» Объединени Председателӗ С. Г. Арутюнов, Наркомвнешторгӑн Протокол пайӗн Начальникӗ В. Г. Кириллов, ҫавӑн пекех тата СССР Наркоминделӗн отдел заведующийӗн помощникӗ М. Ш. Бахитов тата Монголи Халӑх Республикин Совет Союзӗнчи Миссийӗн советникӗ Джаргал-Сайхан.

ЕВПАТОРИ КУРОРЧЕ ҪӖНӖРЕН ӖҪЛЕМЕ ПУҪЛАТЬ

Евпатори курорчӗн нимӗҫсем ишсе ҫунтарса хӑварнӑ ҫурчӗсем вырӑнӗнче юсанӑ санаторисен пысӑк ҫурчӗсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсене кирлӗ оборудовани вырнаҫтарса лартнӑ, квалификациллӗ медицина кадрӗсем тупса панӑ.

Евпаторире халь Хӗрлӗ Ҫарӑн аманнӑ боецӗсемпе офицерӗсем тата темиҫе ҫӗр ача сывалаҫҫӗ. Майнак грязелечебници ӗҫлет.

Иккӗмӗш черетре юсамалли санаторисене, сӑмахран «Ударник» санаторие, центральнӑй курорт поликлиникине тата ыттисене те юсаса хута яраҫҫӗ. Совет Союзӗнчи сывалмалли чи лайӑх пляжа, курорт питомникне тата ботаника садне йӗркене кӗртеҫҫӗ. (ТАСС)

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 23-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 23-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравӗн кӑнтӑр вӗҫӗнче тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ, вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ТЮРЬЕ, ИДЕ тата МЯЕБЕ ятлӑ опорнӑй пунктсене туртса илнӗ.

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн карапӗсем ноябрӗн 20-мӗшӗнче САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравӗн кӑнтӑр вӗҫӗ патӗнче нимӗҫсен миноносецне шыва путарнӑ. Флот авиацийӗ Балтика тинӗсӗнче тӑшманӑн 4.000 тонна тиякан транспортне путарнӑ.

Чехословакире, ЧОП хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, ЧЕПЕЛЬ хулине, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — СОБРАНЦЕ, БУНКОВЦЕ, ПАВЛОВЦЕ, КАПУШАНЫ, ЧИЧАРОВЦЕ, НАРАД, СУРТЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата БАТФА, ЧИЧАРОВЦЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Темиҫе хутчен те алӑран алла куҫнӑ ЧОП хулипе чугун ҫул узелне пирӗн ҫарсем ҫӗнӗрен йышӑннӑ. ЧОП хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 3.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Венгрире пирӗн ҫарсем ТОКАЙ тата ТАРЦАЛ ялӗсемпе чугун ҫул станцийӗсене туртса илнӗ.

Венгри ҫӗрӗнче ноябрӗн 21-мӗшӗпе 22-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 2.550 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫапла вара, Венгри ҫӗрӗнче ноябрӗн 8-мӗшӗпе 22-мӗшӗ хушшинче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем нимӗҫсемпе венгерсен 14.470 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Ноябрӗн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 10 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 18 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) ПОРТНЕ ЙЫШЛӐН ВӖҪСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Ноябрӗн 23-мӗшӗ ыран тенӗ чухне ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци Лепая (Либава) портне йышлӑн вӗҫсе кайса тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, портра нумай тӗлте пушарсем тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ. Ҫар порчӗн ҫурҫӗр пайӗнче, ҫӗнӗ портра тата порт управленийӗн склачӗсен районӗнче уйрӑмах вӑйлӑ пушарсем тухнӑ. Бомбӑсем ҫавӑн пекех тата нимӗҫсен рейдра тӑракан транспорчӗсем хушшинче ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ.

НОЯБРӖН 24-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, Хӗрлӗ Ялавлӑ БАЛТИКА флочӗн карапӗсем пулӑшнипе вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, ноябрӗн 24-мӗшӗнче САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравне тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатса пӗтерне. Нимӗҫсем ҫав утравран РИГА заливне пырса кӗмелли вырӑнсене хӳтӗлекен пункт туса хунӑ пулнӑ. Ҫапла вара, Совет Эстонийӗн ҫӗрне нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ.

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ САРЕМА (ЭЗЕЛЬ) утравӗн кӑнтӑр вӗҫӗ патӗнче тӑшман карапӗсене пыра-пыра ҫапнӑ, тӑшманӑн миноносецне, хуралта ҫӳрекен карапне тата хуралта ҫӳрекен икӗ катерне шыва путарнӑ; виҫӗ бомба тӳрех пырса лекнипе пӗр йывӑр крейсера, хуралта ҫӳрекен икӗ карапа тата пӗр десант баржине сиенленӗ.

Чехословакире, ЧОП хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ, вӑл шутра — УБРЕЖ, ФЕКИШОВЦЕ, РЕВИШТЕ, БЛАТНЕ РЕМЕТИ, ТЕГЕНЯ, МОКЧЯ КРИСОВ, ШАЛАМУНОВА ятлӑ пысӑк ялсем тата ЧЕРНА чугун ҫул станцийӗ.

Венгрире пирӗн ҫарсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса, МЕЗЕ-ЗОМБОР, ЛЕДЬЕШ-БЕНИЕ, МАЙОШ, ПУСТА УЙВИЛАГ, СИМАРДИ, ПАЛОШВЕРЕШ МАРТ, ДЬЕНДЬЕШОЛЬМОШ, БАГ ялӗсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Ноябрӗн 23-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 32 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 70 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире, Чоп хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ. Тӑшман пирӗн чаҫсем малалла куҫса пынине юханшывсем ҫинче чарса лартма хӑтланнӑ, ҫав шывсем ҫумӑрсем ҫунӑ хыҫҫӑн касса кайма йывӑр чӑрмавсем пулса тӑнӑ. Пирӗн пехотинецсемпе артиллеристсем, нимӗҫсем вӑйлӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, малалла кайнӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшман виллисем нумай выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 5 танкне тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 туппине ҫунтарса янӑ. Трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра — 22 тупӑ, 16 миномет тата 45 пулемет. Нимӗҫсемпе венгерсен 600 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Тепӗр участокра совет автоматчикӗсем, чӗркуҫҫи таран шывпа пылчӑк тӑрӑх пырса, тӑшман оборонин тӗреклетнӗ икӗ пунктне савӑрса илнӗ те вӗсен гарнизонӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. 200 гитлеровеца ҫитӗ пӗтерсе тӑкнӑ. 156 нимӗҫпе венгер алӑри хӗҫпӑшала пӑрахса тыткӑна паракнӑ.

★ ★ ★

Венгрире пӗр соединени чаҫӗсем тӑшмана вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ позицисенчен хӑваласа кӑларнӑ. Темиҫе ял, вӑл шутра Симарди ялне, туртса илнӗ. Ҫав ҫапӑҫусенче тӑшман пехотине икӗ батальона ҫитӗ пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫавӑн пекех тата Дьендьеш хулинчен ҫурҫӗртерехре те вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ. Тӑшман танкӗсемпе пехоти умлӑн-хыҫлӑн пӗр чарӑнмасӑр улттӑ хут контратака тунӑ. Совет боецӗсем, вӑйлӑн персе тӑрса, нимӗҫсене хӑваласа янӑ та малалла куҫнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 400 вилли ытла выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 12 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче совет ҫарӗсем нимӗҫсемпе венгерсен 500 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 9 самолетне персе ӳкернӗ. Унсӑр пуҫне тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 8 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

★ ★ ★

Хӗвелтухӑҫ Пруссире нимӗҫсен отрячӗсем чылай участоксенче разведка тума хӑтланнӑ, анчах та вӗсен ӗҫӗ ӑнӑҫман. Пирӗн малти подразделенисем кун каҫа гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫитӗ пӗтерсе тӑкнӑ. Совет авиацийӗ нимӗҫсен ҫулйӗрӗсене бомбӑсем пӑрахса штурмланӑ. Пирӗн летчиксем 4 паровоз, 10 чугун ҫул вагонӗ тата темиҫе автомашина ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Тӑшман аэростатне персе ӳкернӗ.

★ ★ ★

Пултуск хулинчен кӑнтӑртарахра Сергей Манжос старши сержант ертсе пыракан снайперсен ушкӑнӗ пӗр уйӑх хушшинче 180 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Манжос хӑй пӗччен 28 гитлеровеца вӗлернӗ. Тепӗр участокра гварди старшини Давыдов снайпер чапа тухнӑ. Вӑл виҫӗ кун хушшинче 12 нимӗҫе вӗлернӗ.

★ ★ ★

Нимӗҫсен 563-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 1.147-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Иозеф Бехер ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Пирӗн дивизие ҫак ҫулхи август уйӑхӗнче Берлин районӗнче турӗҫ. Сентябрь уйӑхӗнче ӑна Балтика тӑрӑхне ячӗҫ, вэра вӑл ҫавӑнти ҫапӑҫусенче пулчӗ. Эпир пӗрмаях каялла чакса пытӑмӑр. Уйӑх хушшинче дивизи салтакӗсемпе офицерӗсем ҫурри ытла стройран тухрӗҫ. Пирӗнпе юнашар кӗрешекен 227-мӗш пехотнӑй дивизире тӑватӑ пайран виҫӗ пайӗ пӗтрӗ. Салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗсем питӗ начар. Вӗсем пурте кунти дивизисене Хӗвелтухӑҫ Пруссирен татса илнине, вӗсем «хурана» кӗрсе ӳкнине лайӑх пӗлеҫҫӗ. Тинӗс тӑрӑх ӑнӑҫлӑн тухса тарма шанчӑк ҫуккине вӗсем пурте питӗ лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ. Тинӗс ҫулӗ питӗ хӑрушӑ ҫул. Кунти нимӗҫ ҫарӗсене пулӑшу пама боеприпас, хӗллехи тумтир тата почта илсе килекен карапсемпе транспортсене нумайӗшне вырӑс летчикӗсем шыва путарчӗҫ.

Темиҫе кун каярах пирӗн батальона вырӑссене хӑйсен иртнӗ кун йышӑннӑ позицийӗсенчен ҫапса кӑларма приказ пачӗҫ. Вара эпир ирхине 9 сехетре атака пуҫласа ятӑмӑр. Анчах та пире кӗтмен ҫӗртен вӑйлӑн пеме тытӑнчӗҫ. Батальонран ҫуррине яхӑн ҫапӑҫу хирӗнче пӗтрӗ, вара пирӗн васкасах каялла чакма лекрӗ. Эпир хамӑрӑн малтанхи позицисем патне тарса ҫитиччен пире вырӑссен артиллерийӗ пеме тытӑнчӗ. Пирӗн ҫине аҫа-ҫиҫӗм пек вут хӗм тата тимӗр тӑкӑнма пуҫларӗ. Кунтан хӑрушшине эпӗ уччен нихҫан та курман. Аманнисене пӑраха-пӑраха хӑварса, унтер-офицерсемпе салтаксем упаленсе те пулин траншейӑсем патне шуса ҫитме хӑтланчӗҫ. Анчах та шуса ҫитекеннисем питӗ сахал пулчӗҫ».

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн командующийӗ В. Ф. Трибуц адмирал.

Нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн шӑтӑкӗнчех пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара хастарлӑ ӗҫпе пулӑшӑр

Республика шефа илнӗ чаҫрен килнӗ ҫыру

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева, Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. М. Матвеев, ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ И. М. Чарыков юлташсен ячӗпе республика шефа илнӗ чаҫрен саламлӑ ҫыру килнӗ. Часть командованийӗ, Чӑваш халӑхне Октябрьти Социализмлӑ Революци 27 ҫул тултарнӑ ятпа саламласа, ҫапла ҫырнӑ:

«Хӗрлӗ Ҫар иккӗмӗш задачӑна — аманнӑ нимӗҫ тискер кайӑкне хӑваласа пырса, хӑйӗн йӑвинчех пӗтерсе тӑкас задачӑна пурнӑҫлать.

Халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар фашистсен йӑвин территорийӗнче ҫапӑҫать, ҫав вӑхӑтрах фашистла захватчиксене Европӑри ытти ҫӗршывсенче те хӑвалӑн пыра-пыра ҫапать.

Вӑйлӑн пыра-пыра ҫапса, Хӗрлӗ Ҫар гитлерла Германи енче вӑрҫакан ҫӗршывсене стройран кӑларчӗ, халӗ вӗсем нумайӗшӗсем Германие хирӗҫ вӑрҫаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар Румынине, Болгарие, Польшӑн, Венгрин, Чехословакин пӗр пайне фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларчӗ. Хӗрлӗ Ҫар, Югославин ирӗклӗх халӑх ҫарӗпе тачӑн ҫыхӑнса пырса, Югославие нимӗҫ пусмӑрҫисенчен тасатать. Совет Союзӗн ҫурҫӗр пайне нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатса ҫитерсе, Хӗрлӗ Ҫар Норвегие ирӗке кӑларас ӗҫе пуҫларӗ.

Фашистла нимӗҫ захватчикӗсене аркатмаллах пыра-пыра ҫапса тата тӑшман вӑйӗн пысӑк пайне хирӗҫ кӗрешсе, пирӗн воинсем хамӑрӑн союзниксен ҫарӗсене Европӑн хӗвелтухӑҫӗпе кӑнтӑр енче ҫӗнтерӳсем тума, Хӗвеланӑҫ Европӑри халӑхсене хӑйсен ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне ҫӗнӗрен ура ҫине тӑратма пулӑшаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар ҫак мухтавлӑ ҫитӗнӳсене пирӗн паттӑр халӑх яланах вӑйлӑн пулӑшса тӑнипе тума пултарнӑ.

«Пирӗн совет халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫар уменче парӑмра юлмарӗ. Совет халӑхӗ вӑрҫӑн йывӑр условийӗсенче хӗҫпӑшалсем, огнеприпассем, обмундировани, апат-ҫимӗҫ йышлӑн туса кӑларас тата вӗсене Хӗрлӗ Ҫар фрончӗсене вӑхӑтра ҫитерес ӗҫре татӑклӑ ҫитӗнӳсем тума пултарчӗ» (Сталин).

Совет халӑхӗ хӑйӗн паттӑр ӗҫӗпе Хӗрлӗ Ҫар валли мӗн кирлине пӗтӗмпех парса тӑма пултарчӗ, совет государствин вӑрҫӑпа экономика хаватне тата та ытларах ҫирӗплетрӗ, ҫапла вара, ҫӗнтерӳсем тума Хӗрлӗ Ҫара майсем туса пачӗ.

Хӗрлӗ Ҫарпа совет халӑхӗ тунӑ асла ҫӗнтерӳсенче орденлӑ Чӑваш республики те хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне йышӑнчӗ. Эпир чӑваш халӑхне уйрӑмӑнах пирӗн часть Чӑваш республикинче пулнӑ вӑхӑтра пире пулӑшнишӗн тав тӑватпӑр. Чӑваш АССР правительстви тата чӑваш халӑхӗ активлӑн пулӑшнипе пирӗн часть ҫӗршер пин боецсемпе сержантсене, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва паттӑррӑн хӳтӗлекенсене, вӗрентсе хатӗрлеме пултарчӗ. Чӑваш халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫара тимлӗн тӑрӑшнине халӗ промышленноҫра государство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пынипе, государствӑна тырӑ памалли плана тата Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 500.000 пӑт тырӑ пама пулса илнӗ обязательствӑна срокчен пурнӑҫланипе кӑтартса парать.

Эпир сирӗн ҫитӗнӳсемпе тата ҫӗнтерӳсемпе уйрӑмӑнах савӑнса мухтанатпӑр.

Сире тата Сирӗн урлӑ пӗтӗм чӑваш халӑхне эпир: пирӗн часть вӑрҫӑ ӗҫне тата политикӑна вӗренес ӗҫе лайӑхлатассишӗн хӑйӗн вӑйӗсене ӳстерсе ӗҫлӗ тесе, нимӗҫ ирсӗрӗсене тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкма фронта кирлӗ чухлӗ пополнени парса тӑрӗ, тесе шантарса калатпӑр.

Сывӑ пултӑр Совет Союзӗ — пирӗн хӑватлӑ социализмлӑ Тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗршыври халӑхсен иксӗлми туслӑхӗ!

Сывӑ пултӑр орденлӑ Чӑваш республики!

Сывӑ пултӑр гитлерла захватчиксене Германи ҫӗрӗ ҫинче аркатса пыракан мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр Ленин—Сталин партийӗ — совет халӑхӗн ҫӗнтерӗвӗсене хавхалантарса тата организацилесе пыраканӗ!

Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн Верховнӑй Главнокомандующийӗ, Совет халӑхӗн ҫулпуҫӗ тата учителӗ Сталин юлташ!

Часть командирӗ РЕШЕТНИКОВ.
Часть политотделӗн начальникӗ ФОРТУНАТОВ.
Часть штабӗн начальникӗ СУПАГИН».

Сталин юлташӑн доклачӗпе хавхаланса

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри колхозсенче Сталин юлташӑн докладне ӑнлантарса пама тата уйрӑмӑн вӗренме пуҫларӗҫ. «Жнейка» колхоз членӗсем Сталин юлташӑн докладне вӗреннӗ хыҫҫӑн хӑйсем ҫине обязательствӑсем илнӗ. Ҫуракине хатӗрленес ӗҫе халех тытӑнса, вӑрлӑхсене ноябрӗн 14-мӗшӗ тӗлне сортласа пӗтерме пулнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн кунне-ҫӗрне пӑхмасӑр ӗҫлесе, пӗтӗм акмалли вӑрлӑхсене сортласа типӗ амбарсене хывнӑ. Шӑтаслӑхне тӗрӗслеме вӑрлӑхсене районри лабораторине леҫнӗ.

Ҫавӑн пекех «Красный Борденер» колхоз членӗсем те Сталин юлташ докладне итленӗ хыҫҫӑн ҫуракине хатӗрленес енӗпе ҫӗнӗ обязательствӑсем илнӗ. Вӗсем вӑрлӑхсене январӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех сортласа ҫитерсе кондицие лартма, уя халь 1.500 лавӑн кая мар тислӗк кӑларма, январӗн 1-мӗшне 30 центнер кӗл, 20 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрлеме, ял хуҫалӑх инвентарӗсене — ӳресемпе сеялкӑсене, плугсене юсаса ҫитерме пулнӑ. Кӑҫал колхоз гектартан 20 центнер ытла кок-сагыз туса илнӗ. Ҫитес ҫул гектартан 30 центнертан кая мар туса илсе, промышленность валли 6 гектар ҫинче 180 центнертан кая мар кок-сагыз тымарӗ туса пама сӑмах панӑ. Ҫак тӗллевпе колхоз кок-сагыз акмалли вырӑна лайӑх сухаласа хӑварнӑ тата 273 лав тислӗк тӑкнӑ.

С. ШАДИН.

Сталин юлташӑн докладне вӗренеҫҫӗ

ЦУРАЧАК. Районри учрежденисенче ӗҫлекенсем Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ ӗҫхынни депутачӗсен Мускав Совечӗн 1944 ҫулхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче пулнӑ чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклада вӗренме тытӑнчӗҫ. Малтанлӑха вӗсем доклада хаҫатсем ҫинчен ушкӑнӑн ушкӑнӑн вуласа паллашаҫҫӗ.

Доклада уйрӑм пайсем тӑрӑх тарӑнӑн вӗренес тӗллевпе район центренче кружоксем организациленӗ.

П. ВАСИЛЬЕВ.

ДОНБАСРИ ШАХТЕРСЕН ДЕЛЕГАЦИЙӖ БАКУ НЕФТЯНИКӖСЕМ ПАТНЕ ТУХСА КАЙНА

Ворошиловградран Баку нефтяникӗсем патне Донбасри шахтерсен делегацийӗ тухса кайнӑ.

Делегаци хӑйпе пӗрле горняксен рапортлӑ ҫырӑвне илсе каять. Ҫав ҫырура горняксем Пӗтӗм Союзри кочегаркӑри шахтерсем Азербайджанри нефтяниксемпе ҫулленхи тавакан ӑмӑртӑвӑн малтанхи итогӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ. Горняксем унта Сталин юлташ патне янӑ ҫырура тупа тунине мӗнле пурнӑҫласа пыни ҫинчен калаҫҫӗ.

Бакура шахтерсемпе нефтяниксен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн ҫӗнӗ договорне ҫырса алӑ пусаҫҫӗ. (ТАСС).

Чугун çул валли—вутă

Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозăн паха пуçарăвне анлăн сарса пырар!

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă аслă революцин 27 çул тултарни çинчен тунă доклад тата приказ çине ответлесе, чугун çул валли кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра 1.400 кубометр вутă хатĕрлесе турттармалли плана Конституци кунĕ тĕлне — декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство илнĕ.

Çав плана тултарас тесе, вăл колхозран ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа вăрмансем хозяйственнăй çуран тата лашапа 70 çын ĕçлеме пуçланă. Вĕсем хăйсен нормине куллен тултарса пыраççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Вăрнар тата Калинино районĕсенчи вăрманта ĕçлекен мĕнпур колхозниксене хăйсен пуçарăвне йышăнма, кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана хатĕрлесе тата турттарас енĕпе те срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланă.

Кольцовка колхозникĕсем хăйсем чĕнсе калаççĕнче çапла çыраççĕ:

«Эпир чугун çул транспорчĕ Хĕрлĕ Çарăн тăванĕ пулса тăни çинчен лайăх пĕлсе тăратпăр. Чугун çул валли топливо вăхăтра парса тăрасси поездсене пĕр чарăнмасăр çӳреме кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать.

Кашни колхозах хăйĕн планне тултарма пултарать. Çакна тума пирĕн майсем пур. Плана пĕтĕмпех тултарса çитермесĕр вăрмантан тухмастпăр! Транспорт валли вутă çителĕклĕ турттарса парса, чугун çулсене хĕллехи вăхăтра пĕр чарăнусăр ĕçлеме условисем туса парар!»

Республикăри районсенчи партипе совет организацийĕсене малта пыракан колхоз колхозникĕсен пуçарăвне сарма пулăшмалла. Чугун çул валли вутă хатĕрлеме Тăван çĕршыва панă задание вăхăтра пурнăçа кĕртни халăх хуçалăхне оборона тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ялти ĕççыннисене анлăн ăнлантарса памалла.

Планран ирттерсе 600 кубометр

ПИНЕР. Кунта вăрмандунктĕнче Калинино районĕнчи колхозниксем ĕçлеççĕ. Вĕсем куллен лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Услабари «Броневик» колхоз членĕсем чугун çул валли 1.330 кубометр вутă турттарса хатĕрлес вырăнне, паянхи куна 1.400 кубометр хатĕрлесе турттарнă.

Аслă çулпуç Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ĕçпе ответлес тесе, колхозниксем планран ирттерсе тата 600 кубометр вутă хатĕрлесе турттарма пулчĕç. Çак кунсенче вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçлаççĕ.

Вăрман хатĕрлев ĕçне кунта колхоз председателĕ Федоров юлташ ĕçкелесе пырать.

(Хăмăр пифор).

Малта пыракан работниксене награддăлани

Вагонсем юсакан заводсен тĕп Управленийĕ 1944 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕнче каларнă приказ тăрăх, юр тасатмалли вагонсем тăвас ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн нумай работниксене «Отличный вагонщик» значок па наградăланă. Вĕсем хушшинче Канашри вагонсем юсакан заводри вагонсем тăвакан цех начальникĕ Н. И. Белов, комплекс начальникĕ М. И. Шевалдин, слесарьсем Ф. И. Антропов, А. И. Голубев, П. К. Кивиренко, И. М. Николаев, столяр Махоткин, электросварщик Д. Шашков, техника отделĕн начальникĕ Г. Шевелоков, тимĕр цехĕн начальникĕ И. Бойко, прессовщик И. Лашманов, тимĕр И. Новаторский, цех начальникĕ К. Коваленко, рабочи А. Орлов, цех начальникĕ Д. Суперфин, слесарь В. Решетов, цех начальникĕ И. Токарев, токарь М. Флегонтов юлташсем пур.

Вĕренӳпе воспитани ĕçĕ лайăхланать

КАЛИНИНО. Ассакассинчи çинĕ çул вĕренмелли шкулта (директорĕ Е. Хургина юлташ) вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас шутпа, кăçал вĕренӳ çулĕ пуçланнăранах шкулта вĕри апат ситерессине организацилерĕç. Апатпа пĕрле çăкăр та кирлĕ чухлех параççĕ. Çавна пула вĕренекенсем шкула вăхăтра тата пĕр кун сиктермесĕр çӳреççĕ. Вĕри апат ситерме кирлĕ продуктсене çителĕклĕх хатĕрленĕ.

Хĕл кунĕсем çитнĕ май фронтовиксен ачисене пулăшма ăшă тумтирсем те çителĕклĕх хатĕрленĕ.

Шкулта кашни класрах стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Хаçатсене эпир отличнăй вĕренсе пыракан ачасем уроксене мĕнле хатĕрленни, мĕнле кĕнекесем вулани çинчен çыратпăр, ытисене вĕсен опычĕсемпе паллаштаратпăр. Дисциплинăна пăсакан ачасене критиклетпĕр. Çакă шкулта вĕренекенсем хушшинчи дисциплинăна чылай лайăхлатрĕ.

Т. СТЕПАНОВ.
Г. МАЛЬЦЕВ.

Учительсем ачасен ашшĕ-амăшĕсем патĕнче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Атнарти вăтам шкулта вĕренекен учительсем çак кунсенче Туганаша пырса, Атнарта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе пухса калаçу туса ирттерчĕç. Калаçура пĕрремĕш чĕрекри вĕренӳ итогĕсем çинчен сӳтсе-яврĕç. Шкул директорĕ П. Лепешкина юлташ Туганаш ачисем çителĕксĕр вĕренсе пынине палăртрĕ. Çавăнпа та ачасен ашшĕ-амăшĕсене шкул ачисене вĕренме кирлĕ условисене туса пама сĕнчĕ.

Пĕрремĕш чĕрекри вĕренӳ итогĕсене пăхса тухнă хыççăн вăтам шкулта вĕренекен ачасем Павлов çырнă «Судра» пьесăна лартса пачĕç.

(«Çĕнтерӳ çулĕ»)

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пленуме

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн XI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум икĕ ыйту сӳтсе-яврĕ: 1944 çулхи вунă уйăх хушшинче парти ретне илнисен итогĕсем çинчен тата кадрсемпе мĕнле ĕçлени çинчен.

Пĕрремĕш ыйту тăрăх ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ доклад туса панă.

1944 çулхи вунă уйăх хушшинче Шупашкар хулинчи парторганизаци парти ретне 533 çынна, вăл шутран 256 çынна ВКП(б) членне, 277 çынна ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Анчах та хулари парторганизацисен ĕçĕнче парти ретне илес тĕлĕшпе ситменлĕхсем те пур-ха. ВКП(б) хула комитечĕн VII-мĕш тата IX-мĕш пленумĕсем парти ретне илес ĕçе лайăхлатма татăклă кăтартусем панă пулин те, 16 парторганизаци (Кинофикаци управленийĕнчи, Чăваш АССР прокуратурин, столовăйĕсемпе ресторансен трестĕнчи тата ытти хăшпĕр предприятисемпе учрежденисенчи парторганизацисем) хăйсен ретне пĕр çын та илмен. Чугун çулăн 17-мĕш дистанцийĕнчи, пир-авăр фабрикинчи, «Рославльзаго» совхозĕнчи, Военторгри, хĕрачасен 2-мĕшпе 3-мĕш шкулĕсенчи парторганизацисем те парти ретне пĕрер çын кăна илнĕ.

Хăшпĕр предприятисенчи парторганизацисем рабочисен шучĕпе сителĕксĕр ӳснĕ. Парти ретне ӳссесси уйрăмăнах пир-авăр фабрикинчи, торф кăларакан предприятисенчи, табак фабрикинчи, çăкăр пĕçерекен комбинатри парторганизацисенче начар пулса пырать.

Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе те тивĕçлипе йĕркелемен. Парторганизацисем çамрăк коммунистсене хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерме кирлĕ пек пулăшмаççĕ. Çамрăк коммунистсене парти порученийĕсем паман. Çавна пула ĕнтĕ хулари парторганизаци ретĕнче кандидатра тăмалли срок иртнисем 250 çын шутланаççĕ.

Докладчик малалла партиллĕ-организацилле ĕçри чылай ситменлĕхсем çинчен чарăнса тăрать. Парти организацийĕсен секретарĕсем хăйсен организацийĕсене çиреплетессишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, парти пухăвĕсене тĕрĕс ыйтăвĕсене сахал сӳтсе-яваççĕ. Пухусенче критикăпа самокритика сахал пулнă.

Комсомолăн хулари организацийĕ кĕçал пачах та сителĕксĕр ӳснĕ. Вăл хăйĕн ретне пĕтĕмпе те 744 çамрăк кăна илнĕ. Ку ĕнтĕ пуçламăш парторганизацисем комсомолăн предприятисемпе учрежденисенчи тата шкулсенчи пуçламăш организацийĕсене сителĕксĕр ертсе пынинчен килнĕ.

Романова юлташ доклачĕ тăрăх прениере Полукаров, Бельский, Кувшинов (хула совет исполкомĕ), Кошевер (пир-авăр фабрики), Кузнецов, Коган, Соколова (ялхуçалăх институчĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Пленум парти ретне илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе лайăхлатмалли мероприятисене палăртса, решени йышăнчĕ.

Кун хыççăн пленум кадрсем тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен ВКП(б) хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕн Ардаматский юлташăн докладне итлерĕ.

Докладчик Отечественнăй вăрçă партипе хуçалăх организацийĕсенче кадрсене тĕрĕс вырнаçтарас, çамрăк кадрсене ответлă вырăнсене хăюллăн лартас, хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçе ытларах явăçтарас ĕçе лайăхлатма тата кадрсене пулăшас ĕçе вăйлатма хушни çинчен каласа, çав енĕпе туса ирттернĕ ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Кадрсем тĕлĕшпе ĕçлессине чылай çĕрте çителĕксĕр йĕркеленĕ-ха. Водосвет тата Стройтрест руководителĕсем хăйсен вăйĕпе кадрсем хатĕрлесси тата вĕсене производствăра ĕçлеме нумай вăхăтлăха çирĕплетесси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхман. Пир-авăр тата чăлха фабрикисенче те, артельсенче те кадрсене вĕрентес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ертсе пырас ĕçри чылай работниксем юлашки вăхăтра хăйсен экономикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе сӳрекрех ĕçлеме пуçланă. Çак çитменлĕхсемшĕн парти организацийĕсем те ответлă пулса тăраççĕ.

Ардаматский юлташ доклачĕ тăрăх прениере Борох, Антонов, Калинцев (ялхуçалăх институчĕ), Кувшинов (хула совет исполкомĕ), Гончар (ФЗО шкулĕ), Швец (Чебторг), Гельфанд юлташсем тухса каларĕç.

Пленум Ардаматский юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă решенире кадрсем пирки ĕçлессине лайăхлатас тĕлĕшпе татăкла мероприятисем палăртса хăварчĕ.

ВКП(б) хула комитечĕн пленумĕнче ВКП(б) Обкомĕн тата хула комитечĕн секретарĕ Чарыков юлташ, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ, ВКП(б) Центральный Комитече çуменчи Парти контроль комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Логвин юлташ пулчĕç.

Кинофестиваль итогĕсем

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕпе кинофикаци Управленийĕ йышăннă тăрăх, Шупашкар, Етĕрне, Улатăр, Канаш, Çĕрпӳ хулисенче тата республикăри 8 районра комсомолецсемпе çамрăксен кинофестивалĕ пулса иртрĕ. Кинофестивалĕн тĕп задачи — комсомолецсемпе çамрăксене районсемпе хулисем умĕнче тăракан задачăсене анăçлăн пурнăçлама çĕкленĕ, вĕсен ыйтăвĕсемпе интересĕсене сăмахăн пĕлесси тата çамрăксен хушшинче çыхăнăва çирĕплетсе, политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатасси пулнă.

Фестиваль вăхăтĕнче кашни кино-картинăна кăтартнă чухнех сеанссем умĕн лекцисемпе докладсем ирттернĕ. Çапла вара пурĕ 116 лекципе доклад пулса иртнĕ. Вĕсене комсомолецсемпе çамрăксем 39.340 çын пулнă.

Кинофестиваль уйрăмăнах Улатăр, Çĕрпӳ, Етĕрне хулисемпе Чкаловск районра анăçлăн иртнĕ. Улатăр хулин комсомолецсем фестиваль пуçланас умĕн хулари кино-театр çуртне хăйсен вăйĕпе юсанă. Стенасене шуратнă, чӳречесен кантăкĕсене лартнă, фойене лозунгсемпе плакатсем тата портретсем çакса илемлетнĕ. Фронтри земляксемпе тылри производствăри çамрăксен ӳсĕмĕсене кăтартакан витринăсем тунă. Кино курма пыракансем валли «Щорс — граждăн вăрçин халăх геройĕ» «Богдан Хмельницкий». «Чехов — пирĕн çĕршывăн мухтавĕпе чапĕ» тата ытти темăсемпе те докладсем тунă. Кинофестивале 3000 çын хутшăннă.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕ кинокартинăсем кăтартас умĕн лекцисемпе докладсем ирттерме квалификациллĕ лекторсем уйăрнă. Сăмахран, «Сталинград» кинокартинăна кăтартас умĕн «Сталинград хули—вырăс хĕçпăшалĕн чапĕ» ятлă темăпа майор Егоров доклад туса панă. «Жди меня» кинокартина умĕн лектор Никитина юлташ «Совет çамрăкĕн моралĕ сăнĕ» темăпа доклад тунă. Кунта кинофестивале хулара çеç мар, районри пысăк колхозсенче те ирттернĕ.

И. БОЧКОВ.
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

Литература хыпарĕсем

„Тăван Атăл"

Çак кунсенче Чăваш Совет Писателĕсен Союзĕн «Тăван Атăл» ятлă альманахĕн 19-мĕш кĕнеки пичетленсе тухать. Ку номере вырăс писателĕ Вадим Кожевниковăн «Март—Апрель» повесть, Леонид Агаковăн «Хĕрача» ятлă повесĕ, Саламбек, В. Яковлев, К. Пайраш калавĕсем, Ĕсхĕл, Ухсай, Хусанкай, Танюшев поэтсен сăввисем, Ухсайăн «Тутимер» трагедин пĕр пайĕ (вырăсла), С. Шавлы вăрçă вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕ çинчен çырнă статья т. ыт. пичетленессĕ.

„Асамат кĕперĕ"

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет писателĕсем çырнă произведенисем хушшинче Ванда Василевскаян «Асамат кĕперĕ» («Радуга») ятлă повеçĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăрать. Автор ку кĕнекере совет çыннисем нимĕç оккупанчĕсене парăнманнине, фашистла захватчиксем вĕсен кăмăлне хуçайманнине кăтартса панă. Халь чăваш писателĕ Леонид Агаков çав повеçе чăвашла куçарнă. Вăл кĕнеке çитес çулхи январь—февраль уйăхĕсенче пичетленсе тухмалла.

Тĕнчери лару-тăру

Нимĕçсем «лăпкă кĕркунне» пуласшăн панни тĕтĕм пекех сирĕлсе кайрĕ. Нимĕçсен вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан сем хĕвеланăçĕнче союзниксен çарĕсем пысăк активлăн кĕрешни çинчен пăшăрханса çыраççĕ. хĕвелтухăçĕнчи пулас çапăçусем çинчен вара тата ытларах хăраса çыраççĕ.

Союзниксен çарĕсем анлă фронтпа наступлени туса пыраççĕ. халĕ кăнтăр енчи Швейцари чиккинчен пуçласа çурçĕр енчи Маас шывĕн анатри пайĕ таранах наступлени пырать. Çапăçăва союзниксен ултă армийĕ кĕртсе янă. Çурçĕр енче Америкăн 1-мĕш тата 9-мĕш армийĕсем тата Америкăн 3-мĕш армийĕ Германин чи паха центрĕсем патнелле çул уçса пыраççĕ. Америкăн 3-мĕш армийĕ Мец хулине ирĕке кăларнă хыççăн халĕ Саар бассейнне çавăрса илсе пырать. Кăнтăр енче Францин 1-мĕш армийĕ тата Америкăн 7-мĕш армийĕ çапăçаççĕ. Унта союзниксен çарĕсем тусем хушшипе тухса Рейн шывĕ патне пырса çитнĕ. Францин 1-мĕш армийĕ çарĕсем Эльзасăн административлă центрне Страсбург хулине тытса илнĕ. Страсбург хули вăл Рейн шывĕн сулахай хĕррине ларать.

Страсбург хулине тытса илни çинчен Францин çар министрĕ Дьетельм çапла каланă:

«Пирĕн виçĕ тĕслĕ ялав Эльзас çинче вĕлкĕшсе тăрать ĕнтĕ! Альткирх хыççăн Мюлуз хулине ирĕке кăларнă, паян тата Страсбург хулине тытса илнĕ. Франци çак хулана — Эльзасăн çав тери пысăк асăп тӳсне хулине — хĕрӳллĕн саламлать».

Нимĕçсем çурçĕрте пулнинчен те вăйлăрах хирĕç тăраççĕ. Апла пулин те, союзниксен çарĕсем Гейленкирхен хулине илнĕ хыççăн хĕвелтухăçнелле малалла кайнă.

Аахен хулинчен Кельн хулине каякан çулăн пĕр пайĕ союзниксен аллинче ĕнтĕ.

Паллах, хĕвеланăçĕнче сарăлса кайнă вăрçă ĕçĕсем вĕсем пысăк операцисен пуçламăшĕ çеç пулса тăраççĕ-ха. Нимĕçсем çырнă тăрăх та, союзниксем хăйсем умне вырăнти задачăсене пурнăçлассине мар, стратегиллĕ пысăк задачăсене пурнăçлассине лартнă.

Союзниксем çар йышĕ тĕлĕшĕнчен те, вĕсен хĕçпăшалĕсем тĕлĕшĕнчен те нимĕçсенчен вăйлăрах, çакă вăл пуçланса кайнă наступлени ытларах та ытларах сарăлса, вăйланса пырĕ тесе шутлама май парать.

* * *

Германи лару-тăрăвĕ çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать. Фашистла нимĕç хаçачĕсем «пораженилле» шухăш-кăмăлсем çсни çинчен пĕр чарăнмасăр çыраççĕ. Нацистсен «Ангрифф» ятлă хаçачĕ «поражени тӳсес шухăш-кăмăлĕсемпе пур майпа та кĕрешме», чĕнет. Вĕсемпе кĕрешнĕ чухне çынсем ӳт-пӳ е мораль енчен начаррине те, вĕсем чирлине те шута илмелле мар, — тесе çырать хаçат. — Вĕсене шута илсен, халсăр çынсем пĕтĕмпех йĕркерен тухса кайĕç». Хаçат малалла çапла калать: «1932 çулта хирĕç тăнă тăшмансен юлашкийĕсем сыхланса юлнă-ха», тет. Çапла каласа, нимĕçсен фашистла хаçачĕ «поражени тӳсес шухăш-кăмăлсем» халăхăн пите анлă сийĕсене çавăрса илнине йышăнать.

Гитлерла Германин политикăллă лару-тăрăвĕ çивĕчленсе пыни экономикăри йывăрлăхсем уйрăм илсе каласан — апат-симĕç парса тăрас ĕçри йывăрлăхсем. ӳссе пынă пирки тата ытларах вăйланса кайть. Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем, пĕтшеллемесĕр, тискеррĕн çаратса пурăннă çĕрсем вĕсен аллинчен тухса ӳкни пурнăçра палăрма пуçларĕ ĕнтĕ. Çак йывăрлăхсем пирки Германин апат-симĕçпе çĕрĕç министрĕ Бакке те йышăннă. Вăл çак кунсенче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Апат-симĕç парса тăрас ĕçре Германин халь хăй çине çеç шанмалла пулать» тенĕ. «Германи тулашĕнчи районсенчен юлашки çулсенче илсе тăнă хатĕрсене халь урăх илсе тăма çук ĕнтĕ», тенĕ вăл. Апат-симĕç тĕлĕшĕнчен лару-тăру çав тери начарри çинчен каласа парсан, Бакке хресченсене çĕнĕрен апат-симĕç пухасси çинчен асăрхаттарнă. мĕншĕн тесен пирĕн çара тăрантармалла, тенĕ.

Çавăн пек тăвасси çинчен калани çынсене лăплантарас çук ĕнтĕ. Вăл гитлерла Германин шалти политикăллă лару-тăрăвне тата ытларах çивĕчлентерсе ярать.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çитĕнĕвĕсем фашистла Германие пĕтес патне илсе çитерчĕç. Халĕ совет çарĕсем, Югославин, Румынин, Болгари çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕçсен оборонине Балканра та, Венгрире те, Карпат тăвĕсем çинче те аркатса пыраççĕ. Балтика тăрăхĕнче пирĕн çарсем миххе кĕрсе ӳкнĕ нимĕç дивизийĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Хĕвеланăçĕнче союзниксем тăвакан анăçусем икĕ фронт хушшине хĕстерсе лартнă гитлерла Германин лару-тăрăвĕ пĕтĕмпех шанчăксăрри не тата ытларах кăтартса параççĕ.

Акă мĕн пирки ĕнтĕ Будапештран Салаши «правительстви» тарнă, акă мĕншĕн ĕнтĕ нимĕçсен вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан çыннисем йывăр кунçул килсе çитнĕ пирки макăраççĕ, акă мĕне пула ĕнтĕ демократиллĕ çĕршывсенчи халăхсем, гитлерла Германие хирĕç кĕрешекенсенсем. вăл пĕтсе ларас сехете çав тери шанса кĕтсе тăраççĕ».

* * *

«Германи крепоçĕ» шанчăксăррине пула Гитлерăн уççăн е вăрттăн ĕçлекен помощникĕсем хăйсен «нейтралитет» тумтирĕн çурăкĕсене васкаса саплама пуçланă. Çак тĕлĕшпе Франко уйрăмах активлăн ĕçлет. Нумаях пулмасть вăл намăса пĕлмесĕр çапла каланă: Испани «нейтралитет» тытса пырать, çавăнпа та вăл мирлĕ калаçусене хутшăнма тивĕçлĕ, тенĕ.

Франкон çак сăмахне союзлă çĕршывсенчи мĕнпур хаçатсем çав тери çиленсе питленĕ. Çавăн пирки вара Франко хаçачĕсем халь урăхла çырма пуçланă, вĕсем Франкона ют çĕршывсенче «тĕрĕс мар ăнланнă» тесе ĕнентерме хăтланаççĕ. Франкон «Аррива» ятлă органĕ çапла çырать: «Нейтральнăй çĕршывсем конференци ĕçĕсен пĕррремĕш пайне (вăрçăпа тӳрех çыхăнса тăракан ыйтусене татса панă чухне) хутшăнмалла мар, анчах та тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлес ĕçе организацилеме пуçласан, вăрçа хутшăнмасăр юлнă халăхсем çав конференцире пулни питĕ кирлĕ пулса тăрать», тет.

Çапла шутлать Испанири фашистла хаçат. Анчах ирĕклĕхе юратакан халăхсем апла шухăшламаççĕ. Вĕсем çавăн пек «нейтральнăй» правительствăсен ĕçĕ çине урăхла пăхаççĕ.

Демократиллĕ çĕршывсенчи малта тăракан çыннисем Франко генерал калани çинчен мĕн шухăшланине США-ри представительсен палатин членĕ Селлер питĕ уççăн палăртса панă. Испани Германие çар материалĕсем парса тăнă пирки тата Совет Союзне хирĕç çапăçма хĕçпăшаллă вăйсем янă пирки Франкона вăрçă преступникĕ тесе шутламалла, тенĕ вăл.

Я. ВИКТОРОВ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире Венло хули секторĕнче союзниксем çав-çавах малалла куçса пыраççĕ. Союзниксен чаçĕсем Маасбрее хулине йышăннă. Венло хулине пырса кĕреоси 4 миля та юлман. Рурмонд хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Рурмонд хули тĕлĕнче Маас шывĕ çине тухнă.

Германире, Гейленкирхен хули секторĕнче, союзниксен çарĕсем Роер шывĕ еннелле куçса пыраççĕ, вĕсем Гофен хулине йышăннă.

Эшвейлер хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра Лон пунктĕнче çапăçаççĕ. Дюрвисс тата Эшвейлер хулисене тăшмантан тасатнă.

Тионвиль хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре (Франци) союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Германи çĕрĕнчи Оунсдорф хули районĕнче çурçĕрелле куçса пыраççĕ.

Мец хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтернĕ, анчах та хăшпĕр инçетри фортсем çаплах парăнман-ха. Фалькенберг хулинчен çурçĕртерехре союзниксем малалла кайнă, Дьез хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Лотарингири Горбах, Ангвейлер тата Биспинг хулисем патне çитнĕ. Малти чаçсем Лотарингири Миттерсгейм хули тулашне кĕрсе кайнă.

Союзниксен çарĕсем Анатри Эльзас улăхне тухнă, вĕсем Страсбург хулине çитесси тата Рейн шывĕ çине тухасси 20 миля кăна юлнă. Саверн хулине туртса илнĕ. Малти чаçсем çавăн пекех тата ку секторти ытти участоксенче те малалла куçса пыраççĕ. Союзниксем Сен-Дье хулине кĕнĕ, вĕсем Мерт шывĕнчен хĕвелтухăçнелле самаях малалла кайнă.

Бельфор коридорĕ районĕнче тăшманăн хаяр контратакисене сире-сире янă. Бельфор хулине çуррине ытла тăшмантан тасатнă. Çавăн пекех тата Мюлуз хулине те ирĕке кăларнă. Начар çанталăк тăнă пирки авиаци вăйлах çапăçайман.

Франци чаçĕсем Страсбург хулипе юнашар ялсенче çапăçаççĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: американецсен 7-мĕш армийĕнче тăракан французсен малти танковăй чаçĕсем Страсбургпа юнашар ялсенче çапăçаççĕ. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, тăшман вăйлах хирĕç тămасть.

Страсбург хулине нимĕçсенчен ирĕне кăларнă

ПАРИЖ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: Францин çар министрĕ Дьетельм çакăн пек каланă: «Пирĕн виçĕ тĕслĕ ялав Эльзас çийĕнче вĕлкĕшсе тăрать. Альткирх хули хыççăн Мюлуз хулине ирĕке кăларнă, паян—Страсбург хули ирĕке тухрĕ. Франци çак хулана — Эльзасри асап тӳснĕ хулана—чĕререн саламлать».

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Голландире союзниксен çарĕсем Венло хули районĕнче çав-çавах малалла наступлени туса пыраççĕ, вĕсем халĕ Венло хулине çитесси 3 миля кăна тăрса юлнă. Гельмонд хулипе Венло хули хушшинчи чугун çултан çурçĕртерехре союзниксен чаçĕсем çӳреме йывăр вырăнта пĕр миля малалла кайнă, Хорст хулине йышăннă.

Германире Гейленкирхен хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Гофен хулипе Беек хули районĕнче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă, унта тăшман хытă хирĕç тăрать. Юлих хули районĕнче союзниксен чаçĕсем Кослар хули еннелле майĕпен куçса пыраççĕ. Вейсвейлер хулинчен çурçĕртерехре çапăçусем Лом хулинче пыраççĕ. Вейсвейлер хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-анăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăракан чаçсем Вейсвейлер хули патнелле сывхарса пыраççĕ. Гюртген вăрманĕ районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, союзниксен чаçĕсем майĕпен малалла куçса пыраççĕ.

Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Иоганнс Рорбах хули патне пырса тухнă, пехота Лейвейлер тулашне çитнĕ.

Лотарингире, Фремерсдорф хули çывăхĕнче, тăшман контратакине сирсе янă. Унтан кăнтăртарахра союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Фиштингер хули патне çитнĕ. Саверн проходĕнче тăшман оборонине татса, союзниксен çарĕсем Страсбург хули патне çитнĕ, Çурçĕр Эльзас тӳпемĕнче нумай хулана ирĕке кăларнă. Çав тери хăвăрт наступлени туса пырса, союзниксем 3.000 çын ытла, вăл шутра икĕ генерала, тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армири Англи чаçĕсем Козина шывĕ çинче, тăшманпа хаяррăн çапăçса, тăшмана тапăнмалли укреплени тунă. Нимĕçсен танксем пулăшнипе тунă темиçе вăйлă контратакине сирсе янă. Çавăн пекех 5-мĕш арми чаçĕсем те тăшманăн темиçе хаяр атакине сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири тата Югославири вăрçă объекчĕсене пырапыра çапнă.

ТИТО МАРШАЛА ХАЛĂХ ГЕРОЙĔ ЯТНЕ ПАНИ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Тан Юг агентстви çапла пĕлтерет: Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Вечи Иосип Броз Тито маршала Халăх геройĕ ятне панă.

ЮГОСЛАВИРЕ ХАЛĂХ ТĂШМАНĔСЕН ПУРЛĂХНЕ КОНФИСКАЦИЛЕНИ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Ирĕклĕ Югослави» ятлă радиостанци пĕлтерни тăрăх, Югослави Халăхне Ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен Вече президиумĕ решени йышăннă. Çав решени тăрăх, халăх тăшманĕсен пурлăхĕ государство аллине куçмалла.

Решенире каланă тăрăх, государство аллине Германин тата унăн гражданĕсен Югослави çĕрĕнчи пĕтĕм пурлăхĕ куçать. Çавăн пекех тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕнче е Югославин партизан отрячĕсенче тăрса кĕрешмен нимĕçсен пурлăхĕ те государство аллине куçать. Нейтральнăй государствăсен гражданĕсем пулса тăракан нимĕçсем оккупаци вăхăтĕнче Югославие сиен туман пулсан, вĕсен пурлăхне тивмеççĕ. Вăрçă преступникĕсен тата вĕсене пулăшса тăнă çынсен, вĕсем кирек хăш государство гражданĕсем пулсан та, пĕтĕм пурлăхĕ государство аллине куçать.

Оккупаци вăхăтĕнче вăйпа илсе кайнă çынсен, çавăн пекех тата хăйсем тухса кайнă çынсен пурлăхĕ те государство аллине куçать. Государство çав пурлăха, ăна кама пама тивĕçли çинчен татăклă решени йышăниччен, хăйне шанса панă пурлăх пек тытса тăрать. Оккупаци влаçĕсем кăларнă приказсем тăрăх урăх çынсене панă пурлăха, вĕсемпе мĕн тумалли çинчен татăклă решени йышăниччен, вăхăтлăха тытса илеççĕ.

Государство аллине куçнă е вăхăтлăха тытса илнĕ пĕтĕм пурлăха халăх пурлăхне тытса тăракан государство управленийĕ пăхса тăмалла. Çав пурлăха вăл ирĕке тухассишĕн пыракан вăрçăра татăклă çĕнтерӳ тăвас тĕлĕшпе тата Югослави экономикине ура çине тăратас тĕлĕшпе лайăх усă курма тивĕçлĕ.

Францин консультаци ассамблейинче де Голль тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Консультаци ассамблейинче пренисем хыççăн тулашри политика çинчен де Голль генерал сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Рейн шывĕ «Франципе, Бельгипе, Голландипе тата пăртак Англипе те кирлĕ хăрушсăрлăх чикки пулса тăрать», тенĕ. Германин кунçулне татса парасси—Францишĕн пурнăçпа вилĕм ыйтăвĕ пулса тăрать, тенĕ вăл. Халиччен тунă результатсене пăхса тухса, де Голль малалла çапла каланă: «Çĕнтернĕ çĕршывсем пĕтĕм тĕнчери организаци туса хумалла. Çав организаци экономикăпа хăрушсăрлăх тĕлĕшĕнчен кашни халăха сыхламалла. Чи хăватлă çĕршывсем çав пĕтĕм тĕнчери системăна хăйсем ертсе пымалла. Франци çав çĕршывсенчен пĕри пулмалла. Çĕнĕрен пĕрлĕхлĕ çĕршыв пулса тăнипе, Франци пĕтĕм тĕнчери мире сыхлама пулăшма пултарать. Анчах та Франци Европăпа пĕтĕм тĕнче пирки йышăннă решенисене, вĕсене вăл ытти çĕршывсемпе пĕртанах пулса сӳтсе-явмасан, хăйшĕн обязательнăй тесе шутлама пултараймасть.

Де Голль малалла çапла каланă: Германи ыйтăвне татса панă хыççăн Франци Европăра чăн-чăн пĕрлĕх тăвассине шантарса тăрать; çав пĕрлĕхе Мускав, Лондон тата Париж пĕрле килĕштерсе ĕçлесе тумалла.

Итали çинчен де Голль çапла каланă: ыйтусене татса парасси вăраха кайрĕ пулин те, Франци Италипе килĕшессине шанса тăрать, тенĕ.

КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИН ЛАРĂВĔНЧЕ БИДО СĂМАХ ТУХСА КАЛАНИ

БРАЗЗАВИЛЬ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио пĕлтернĕ тăрăх, Францин консультаци ассамблейи ларăвĕнче Францин тулашри политики çинчен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Жорж Бидо сăмах тухса каланă.

Вăл çакна палăртнă: Франци правительствине йышăннă вăхăтра Франци çарĕ Рейн шывĕ патне чи малтан пырса çитни—лайăх ĕç пулса тăчĕ.

Черчилльпе Иден Парижа пырса кайни çинчен вăл çапла каланă: вĕсем Парижа килсе кайни Франципе Англи хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес тĕлĕшпе паха ĕç пулчĕ, тенĕ.

Де Голль Мускава каясси çинчен Бидо çапла каланă: вăл Мускава кайни Францин пулас пурнăçĕшĕн тата союзниксем пĕр-пĕрне лайăхрах ăнланассишĕн питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать, мĕншĕн тесен Совет Союзĕ Европăра хăйĕн çухатăвĕсене тата хăйĕн пĕлтерĕшĕпе пахалăхне кура пысăк вырăн йышăнса тămалла, унсăрăн çĕнĕ Европăна туса хума çук. Пирĕн Хĕвеланăçĕпе кăна мар, Хĕвелтухăçĕпе те союзлă пурăнмалла. Эпир нихăçан та Хĕвеланăçĕнче çеç питĕрĕнсе лармăпăр, мĕншĕн тесен политикăпа мораль интересĕсем пире Европăн Хĕвелтухăçĕпе çыхăнтарса тăраççĕ.

КОНСУЛЬТАЦИ АССАМБЛЕЙИ ПАРЛАМЕНТСЕМ ХУШШИНЧИ УШКĂНСЕМ ТĂВАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННĂ РЕЗОЛЮЦИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран çапла пĕлтерет: консультаци ассамблейин ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Венсен Ориоль ассамблейăра ноябрĕн 22-мĕшĕнче пренисем пынă вăхăтра çав комисси йышăннă решени çинчен пĕлтернĕ. Çав решенире Франципе Британи парламенчĕсем хушшинчи ушкăна çĕнĕрен туса хурасси çинчен каланă. Комисси çавăн пекех тата СССР Верховный Совечĕн депутачĕсене Парижа пыма чĕнме йышăннă. Депутатсем Парижра Францилле Совет Союзĕн парламенчĕсем хушшинчи ушкăна тăвасси çинчен калаçса татăлмалла. Франци делегачĕсемпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен конгресĕн членĕсем пĕр-пĕрин патне килсе каймалла тесе йышăннă решение ырланă.

ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕНЧИ ПРОИЗВОДСТВĂЛЛА ПРОФСОЮЗСЕН КОНГРЕСĔН ЧИКАГОРИ СЪЕЗЧĔ

ЧИКАГО, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Производствăллă профсоюзсен конгресĕн çуллен пухăнакан съезчĕ уçăлнă. Унта 600 делегат.

Производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕ Мэррей съезда уçнă чухне çапла каланă: çак съезд «çĕнтерӳ съезчĕ» пулса тăрать, мĕншĕн тесен юлашки суйлавра реакцие вăйлăн пырса çапнă, тенĕ. Делегатсем тăвăллăн алă çупнă. Производствăллă профсоюзсен конгресĕн Политикăллă ĕçсем тăвакан комитечĕ çинчен Мэррей çапла каланă: Производствăллă профсоюзсен конгресĕ çав Комитета çаплипех хăварма сĕнчĕ. Производствăллă профсоюзсен конгресĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи тата пĕтĕм тĕнчери мĕнпур профсоюзсен организацийĕсем хушшинче пĕрлĕх тăвассишĕн пыракан юхăма пулăшса тăрать, тенĕ. Производствăллă профсоюзсен конгресĕ забастовкăсем тумастпăр тесе сăмах панине тепĕр хут çирĕплетсе парса, Мэррей çапла каланă: Производствăллă профсоюзсен конгресĕнче тăракан рабочисем тăшмана çĕнтерме кирлĕ хĕçпăшалсем çителĕклĕ туса тăрĕç, çакă вăл хальхи вăхăтра чи кирлĕ задача пулса тăрать, тенĕ.

Мэррей Рузвельт янă салама вуласа панă. Рузвельт унта тăшмана çĕнтермешкĕн тата çирĕп мир тумашкăн çĕршыври пĕрлĕхе сыхласа хăварма чĕнет.

Производствăллă профсоюзсен конгресĕн секретарĕ Керрей ВЦСПС председателĕ В. В. Кузнецов юлташ совет профсоюзĕсен ячĕпе янă салама, Латинла Америкăри ĕççыннисен конфедерацийĕ ячĕпе Ломбардо Толедано янă салама тата Канадăри профсоюзсен конгресĕ янă салама вуласа панă.

МИКОЛАЙЧИК ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 24-мĕшĕнче каçхине Лондонра Польша правительствин премьер-министрĕ Станислав Миколайчик вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ. Çĕнĕ правительство тума премьер-министрăн заместительне Кваппинские хушнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Аш-какая клеме хума илсе пынă чухне çакăн пек документсем пулмалла: 1) выльăха пусас умĕн ăна ветеринари врачĕ пăхни çинчен çав врач панă справка, 2) выльăх тирне панине кăтартакан квитанци, 3) какай кăмăн пуçне кăтарнă колхоз е урам комитече панă справка, 4) выльăх какайĕпе пĕрле унăн чĕрине, пĕверне, ӳпкине тата сулине илсе пымалла. Çаксемсĕр какай çине клеме хумаççĕ.

Горисполкомăн ялхуçалăх отделĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноспа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04211. Типография № 1, Управления полиграфической промышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.